БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

V Межрегиональный конкурс методических разработок «Родной язык-источник знаний»

Номинация «Çирĕп вăй-хал – сирĕп сывлăх»

МБДОУ «Детский сад «Солнышко»
Урмарского муниципального округа Чувашской Республики

Конспект развлечения в средней группе

**«Опыт и традиции чувашского народа в культурно-оздоровительной деятельности дошкольников»**

# «Çăкăртан асли çук»



Выполнила: воспитатель первой квалификационной категории

Мефодьева В.Н.

Кудеснеры

2023

Ĕçĕн тĕп тĕллевĕ:

Ачасен хускану-куçам хăнăхĕвеĕсене пуянлатни, ачасене чăваш халăх уявĕсене явăçтарни.

Тĕллевĕсем: ўт-пĕве, унăн илемне аталантарма, килĕшўллĕ хускалма, çаврăнаçуллă пулма хавхалантарни, вĕренўре илемлĕх мелĕсемпе усă курса ачан кĕвве итлесе ăнланас тата юрласа кăтартас пултарулăхне малалла аталантарни, хай пултарнă пек юрлама-ташлама хавхалантарни. Ачасене музыка пултарулăхне, чăваш халăх уявĕсене, ваййи-юррисене хутшăнма хавхалантарни.

**Словарь:** çурла, вырма, пучах.

**Воспитателĕн малтанхи ĕçĕсем:**

1. Кĕркуннехи пулăмсене,ваттисен сăмахĕсене пуçтарни.
2. Чăваш юррисене, вăйисене тишкерни.

**Ачасемпе малтан иртермелли ĕçесем:**

1. «Амăшĕпе хĕрĕ» чăваш халăх юмахне вулани.
2. Мини-музей кайса курни.
3.Чăваш юррисене, ташшисене вĕренни.

Оборудовани: «тырă кĕлти», «ниме пуçĕн» хĕрлĕ хăю çакнă шалча, проектор, чăваш юррисемпе носитель флешĕ.

Занятин структури:

(Чăваш тумтирне тăхăннă ачасем зала кĕреççĕ.)

**Ведущий:** Ачасем, пирĕн патне хăнасем килнĕ, айтăр вĕсене ырă сунса кĕтсе илер. Ырă кун пултăр! Мĕнле илемлĕ тăхăннă эсир! Эпир сирĕнпе паян кĕркунне уявне чыслатпăр. Мĕн авалтанах чăваш халăхĕ çĕр ĕçĕсене пĕтерсен хăна чĕннĕ, савăннă. Айтăр эпир те юрлар, савăнар.

**«Илемлĕ» - юрă.**

Эпĕ ачасем ватă çынсем каланă сăмахсене пĕлетĕп.

- Умăнтан çăкăр ан татăлтăр.
- Çăкăртан аслă ан пул.

Ĕлĕк-авал çĕр çинче ĕçлекенсем тырă вырса пĕтерсен юлашки тырă пучахĕсене хăварса «сухал» туса çыхнă, ăна илемлетнĕ. Ун патĕнче вăйăсем вылянă. Айтар эпир те вайа выляр («Çерем ватса вир акнă»).

**Сăвăсем:**

1. Кĕр тăриллĕ шуçăм,
Савăнать ял-йышăм.
Тулăх çитĕннĕ тырри,
Ян каять уй-хир пари.

2. Эп ыраш пулатăп,
Тинĕс пек кашлатăп.

Тутлă çăкăр çитеретĕп,
Çын чуне хевте кÿретĕп.

3. Пĕрчĕм виç кĕтеслĕ
Пăтăм пит сĕтеклĕ.
Эпĕ сумлă хуратул –
Сар сĕтел илемлĕ!
4. Эпĕ – сарă тулă,
Пусăм теççĕ çуллă.
Выр та авăрт, çăнăх ту,
Пулăп шурă хăпарту.
(Ачасем ларассе).

**В.** – «Эсир, ачасем, ватă çынсем çутçанталăка сăнаса тĕрлĕрен пулăмсем çинчен каланине пĕлетĕр-и?»

- Кĕркунне йĕкел нумай пулсан, çитес çул ыраш аван пулать тет.(Керуннехи юмана катартассе).
- Хуркайăксем çÿлтен вĕçсессĕн, сĕлĕ çÿллĕ пулать.(Хуркаăаксен картине кăтартаççĕ).
- Пилеш нумай пулсан, тепĕр çул ыраш лайăх пулать.(Пилеш йываçне кăтартаççĕ).
(«Нимене» юрă илтĕнет.)
(Зала «ниме пуçĕ» кĕрет.)

**Ниме пусе**: Ырă кун сунатап сире ачасем!

**Ачасем:** Сире те ыра кун сунатпар!

**Ниме пусе:** Акă эпĕ те çитрĕм!

**Воспитатель:** Кам пулатăр-ха эсир?

**Ниме пусе:** Эпĕ ниме пуçĕ. Пăхăр-ха, мĕнле ăнса пулчĕ кăçал тыр-пул. Хамăр пуçтарса ĕлкĕрейместпĕр. Пурне те сире нимене чĕнетĕп. Кам ÿркенмест – пулăшар.

**Воспитатель:** Паллах, пулăшатпăр. Пирĕн ачасем питĕ маттур
«Çĕр еçченесене хам куртăм» вайана выляссе.

**Воспитатель:** Тырă вырса пĕтерсен пучахсем ÿксе юлаççĕ. Пуçтаратпăр-и, ачасем?( «Кам хавартрах?» вайа выляссе).

**Ниме пусе:** Лайăх ĕçленĕ хыççăн ташласа юрлама та кăмăллă.
«Тух-ха Ванюк» вăйă.

**Воспитатель:** Тата мĕнле вăйă вылăпăр?
Ачасем: «Çăпаталла» вылятпар!

Сăвăсем:

1. Алăна çумасăр
   Çăкăр ан тыт:
   Çăкăртан асли çук.
2. Çĕлĕке хывмасăр
   Çăкăр ан тыт:
   Çăкăртан асли çук.
3. Хырăм выçмасăр
   Çăкăр ан тыт:
   Çăкăртан асли çук.

**Воспитатель:** Эпир, ачасем, сирĕнпе паян ĕлĕкхи чаваш халахен «Вырма» уявне уявларамар, сире вăйăсем килĕшрĕç-и? Мĕншĕн? Тĕрĕс, вăйăсенче эпир çӳлĕ сикме, пултаруллă пулма, хăвăрт чупма вĕрентĕмĕр. Çакă вара пире сывлăхлă пулма пулăшать.

**Воспитатель:** Мĕнле тутлă çăкăрпа кукăль çĕнĕ тырăран. Эпĕ сире çĕнĕ çăкăр çиме чĕнетĕп.
Çăкăр çĕнĕ тырăран
Халь пĕçертĕмĕр паян.
Килĕр пурте хăнана
Çĕнĕ çăкăр тутанма.
Воспитатель алшăлли çине хунă çаврака çăкăр илсе кĕрет, ачасене сĕтел хушшине чĕнет.

Приложени

Вайă «çерĕм ватса вир акрăм» (Г.И.Воронцов «Ача-пăча вăййисем»)

Вайă «çĕр ĕçченĕсене хам куртăм» (Г.И.Воронцов «Ача-пăча вăййисем»)

Ташă «Тух-ха, Ванюк» (Г.П.Захарова «Ачалăх сасси»)

Вайă «çăпаталла» (Г.И.Воронцов «Ача-пăча вăййисем»)